Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

100 (7740) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Чăваш Республикин Президенчĕн Çырăвĕ

## «Чăваш Ен: пуласлăхри тата пуласлăх валли»

*Декабрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă «Чăваш Ен: пуласлăхри тата пуласлăх валли» Çырăвĕпе паллаштарчĕ. Иртнине хаклани тата малашлăх çул-йĕрне палăртни пулса тăрать вăл.*

*Хальхи экономикăпа финанс кризисĕн йывăрлăхĕсене чăтса ирттересси пирки калаçни кăна çителĕксĕр. Чи малтанах ăс-хакăл çĕнетĕвĕн, демографи, экологи, энергетика, технологи кризисĕсене çĕнтерес пулать.*

*Республикăн хальхи аталанăвĕ йăлана кĕнĕ экономика йĕркине улăштарма, унăн тĕп принципĕсене гуманизацилеме, экологи тата экономика тытăмĕсене аталантармалли концепцисене килĕшӳллĕ тума палăртать. Çирĕп аталану вăл инвестицисемпе çĕнĕ технологисем çеç мар, чи малтанах социаллă çĕнĕлĕхсемпе обществăн тата патшалăхăн аталану приоритечĕсене тата тĕллевĕсене улăштарас пулать.*

*Президент палăртнă тăрăх, Чăваш Енри Вĕрентӳ, Культура министерствисем пĕрле тĕллевлĕ çыхăнса ĕçлесе, республикăри шкулсемпе библиотекăсене компьютерсемпе чи çӳллĕ шайра тивĕçтернине шута илсе, республикăри пĕтĕм халăха компьютер пĕлĕвĕ парас енĕпе тĕллевлĕ программа туса хатĕрлеме тивĕç.*

*Сывлăха сыхлас ĕçе аталантарассипе, сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырассипе те Çырура пысăк вырăн уйăрнă.*

*Хаçат вулакансене эпир президент Çырăвĕ пирки хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме ыйтрăмăр.*



**Людмила Германовна КОВАЛЕВА, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Малтанах çавна каласа хăварас тетĕп. Республика Правительствин çуртĕнче Президент республикăн Патшалăх Канашне янă хăйĕн Çырăвĕпе паллаштарнин мероприятине манăн та хутшăнма тӳр килчĕ. Мансăр пуçне унта пирĕн районтан район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та, Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев та, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров та, «Ударник» хуçалăх ертӳçи П.П. Давыдов та, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н.Г. Ванеркин та хутшăнчĕç.

Ман шутпа президент Çырăвĕ питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ документ пулса тăрать. Унта республика шайĕнче иртнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсен итогĕсене те пĕтĕмлетнĕ, малашлăхри пысăк ĕçсен программине те палăртнă.

Тунмастпăр, тăван республикăна кăçал çăмăл килмерĕ. Кунта производство, ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсем тата ытти сем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Апла пулин те пирĕн республика вĕсене япăх мар татса пама пултарчĕ.

Ертӳçĕсем умне те президент анлă пĕлтерĕшлĕ задачăсем лартрĕ. «Пирĕн, чи малтанах ертӳçĕсен, Чăваш Ене унăн тивĕçлĕ пуласлăхĕшĕн пуласлăхра курма мехел çитермелле»,– терĕ вăл.

Президент Çырура палăртса хăварнă «Экологи – политика никĕсĕ тата экономикăшăн çул кăтартакан паллă» йĕркере палăртнă задачăсене татса парассипе те пирĕн çине тăрса ĕçлес пулать.

**Владимир Германович НИКИТИН, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ:**

– Президент Çырăвне хакланă май çавна каласа хăвармалла. Николай Васильевич ытти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене палăртнипе пĕрлех Çырура тавралăх тирпей-илемне сыхласа хăварас, ăна вараласине чарса лартас ыйтусене те сивĕч çĕклет. Кунта вăл илсе кăтартнă çак тĕслĕхсем вырăнлă тесе шутлатăп: «Республикăра пурăнакан çын хăй хыççăн мĕн чухлĕ çӳп-çап тăкни пирки шухăшласа пăхнă-и эсир? Шупашкар ку вырăнпе Европăран та «иртсе кайнă». Шупашкарта пурăннă кашни çын иртнĕ çул 818 килограмм çӳп-çап «туса кăларнă», ку хисеп Чехири кăтартуран 2,8 хут ытларах».

Пирĕн района илес пулсан та йăла каяшĕсене вырнаçтарассин ыйтăвĕ сивĕч тăрать. Ялсем тавралăхĕнче, вăрмансем çывăхĕнче çӳп-çап тăкса тултарнă вырăнсене сахал мар курма пулать. Ку ыйтăва татса парассипе вара эпир малалла çирĕп утăм турăмăр тесе калама пулать. Сывăх вăхăтрах районти Ивановка ялĕ патĕнче йăла каяшĕсене вырнаçтармалли хальхи вăхăт ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çĕнĕ полигон хута каймалла. Ăна 30 çуллăха палăртнă. Çĕнĕ технологи мелĕсене пăхăнса тунă полигон сывлăша та, шывсене те варалассинчен хӳтĕлĕ. Сăмах май, кун пек полигонсем республикипе те хальлĕхе çук-ха. Апла пулсан эпир президент ума лартнă задачăсене ку енĕпе пурнăçлама тытăннă та ĕнтĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА, çамрăк специалист:**

Республика Президенчĕн çырăвне чăваш наци радиопа итлеме май пулчĕ. Президентăн пĕлтерхи çырăвĕ те питĕ вăйлăччĕ, кăçал вара татах та вăйларах, мĕнле ыйтусем çинче чарăнса тăрать-ши, тесе шутлаттăм маларах.

Н.В. Федоров вара кăçал та питĕ çивĕч ыйтусем хускатрĕ. «Экологилле экономикăшăн» тăрăшмаллине тата ăна мала кăлармаллине калани паянхи пурнăçра чăнах та тĕп вырăнта тăрать. Унăн çырăвĕнче йăлари каяшсем пирки калани те килĕшрĕ. Пирĕн районта полигон тăвас ĕçе вăхăтра пуçăнни вара Президент «каличчен» маларах пулнишĕн те кăмăл çĕкленчĕ. Пирĕн республикăн çĕр айĕнче нефть-газ çук-çке-ха, çынсем тĕп пуянлăх пулса тăраççĕ. Çавăнпа та Президент çын ресурсне мала кăларни те килĕшрĕ. Çырура палăртнă приоритетлă енсем вăй илсе пырсан тин социаллă экономика аталанăвĕ пуласси куç кĕрет.

Президент янă çыру пĕр-пĕр регион шайĕ валли çеç мар, çĕршыв шайĕ валли хатĕрленĕнех туйăнчĕ. Çакă та мана Президент малашлăха курса хатĕрленĕ çырăвне вăйлă тесе хаклама май парать.

Хĕл çитрĕ

## Сивĕ çанталăк тимлĕ тата асăрханулла пулма ыйтать

*Яланхи пекех хĕл тĕрлĕ службăсемшĕн те, çынсемшĕн те пысăк тĕрĕслев пулса тăрать. Хальхи пек пысăк сивĕсем килсен пушшех те.*

*Çавна май çынсен пурнăçĕшĕн, хăрушсăрлăхшăн тӳррĕмĕн ответлă пулса тăракан ертӳçĕсемпе телефонпа çыхăнса паянхи лару-тăрăва хаклама ыйтрăмăр.*

**В.Г. Никитин, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи:**

– Паянхи кун ăшă парса тăрассипе котельнăйсем пурте йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Шывпа тивĕçтерессинче йывăрлăхсем пур. Шыв башнисен автоматики шăнса ларни тĕл пулать. Кун пек чухне коммуналлă хуçалăхсем хăйсен балансĕ çинчи объектсене çитсе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Çакăн йышши объектсем районта хуçалăхсем çинче те пур. Çавăнпа та вырăнсенче те ку енĕпе тимлĕ пулмалла. Ял çыннисен те колонкăсене шăнасран хӳтĕлемелле. Паллах, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пĕтĕм ĕçе йĕркелесе, тĕрĕслесе тăмалла.

Кил-çурта хутса ăшăтнă чухне те тимлĕх сухатма юрамасть.

**З.Ю. Дипломатова, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи:**

– Шкулсенче ăшă парса тăрас ĕçсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

Ытлари кун мĕн пур шкулсемпе çыхăнса çакăн пек кăтартусем патăмăр: сывлăш температури 27 градуса çити е ытларах ансан 1 – 4-мĕш классенче вĕренекенсен шкула каймалла мар, 30 градуса çитсе унран ытларах чаксан 1– 9-мĕш классен вĕренмелле мар, 35 градуса çитсе унран ытларах чаксан 1 –11-мĕш классен шкула кайма кирлĕ мар.

Ĕнер сывлăш температури 33 градусран чакса кайнăран 1 – 9 классенче уроксем иртterме хушман.

Çак сĕнӳсене ашшĕ-амăшĕсен те лайăх пĕлсе тăмалла. Ача-пăча киле юлнăран вĕсен уйрăмах тимлĕ пулмалла.

**Н.П. Милютин, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн ертӳçи:**

– Çанталăк малаллахи кунсенче тата ытларах сивĕтессине калаççĕ. Кун пек чухне кашни çыннăн хăйĕн асăрханулла пулмалла. Халĕ кăмакасене ытларах хутнăран вĕсене пăхсах тăмалла. Электричество приборĕсемпе те виçеллĕ усă курмалла.

Ача-пăчана та кусран вĕçертмелле мар.

Тĕрлĕ йывăрлăхсем сиксе тухсан 62-3-59, 01 телефонсемпе шăнкăравламалла.

Пĕрлехи информаци кунĕ

## ЧР Президенчĕн Çырăвĕпе паллаштарĕç

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми – «Чăваш Республикин Президенчĕн ЧР Патшалăх Канашне тата Чăваш Ен çыннисем патне 2010 çул валли янă Çырăвĕ».

Районти коллективсенчи ĕç çыннисемпе тĕл пулма ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ А.М. Стальская, «Чăваш Республикинчи вĕрентӳ институчĕ» патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕн ректорĕ В.Д. Данилов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «АККОНД» ООО генеральнăй директорĕ В.Н. Иванов, РФ Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕн Л.Л. Лебедевăн пулăшаканĕ М.И. Федотов килеççĕ. Ушкăнсем Катькас ял тăрăхĕнче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, Калайкасси, Оринин, Москакасси шкулĕсенче, Муркаш райповĕнче, «Сундырь-Хлеб» предприятире пулаççĕ.

**Хамăр инф.**

Район администрацийĕнче

## Тимлемелли ыйтусем çителĕклех

Иртнĕ тунти кун район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Юрий Александрович çулталăк вĕçленсе пынă май кашни структура подразделенийĕн ку таранччен мĕн тунине тишкерсе кăçал тумалли ĕçсене туса пĕтермеллине палăртрĕ.

Хутса ăшăтмалли тапхăр малалла пырать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин каланă тăрăх, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем октябрь уйăхĕшĕн газшăн тӳлесе татнă. Халĕ ку ĕç ноябрь уйăхĕшĕн пырать. Владимир Германович çавăн пекех çӳп-çап тăкмалли полигона тăвас ĕç мĕнле шайра пыни çинче, çулсене тытса тăрас ыйтусем çинче чарăнчĕ.

Районти фермăсенче вара вылăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли тапхăр пырать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн етӳçи В.К. Ананьев палăртнă тăрăх, сĕт хакĕ кăна çиелелленсе çитрĕ. Хуçалăхсем сĕте 1 литрне 13-14 тенкĕпе сутаççĕ.

Умра – Çĕнĕ çул уявĕсем. Çĕршывра пулса иртекен инкексем те пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсем çине тимлĕрех пăхма хистеççĕ. Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Н.П. Милютин уявсем инкексĕр иртсе кайччăр тесе пур мерăсене те йышăнасси пирки каларĕ. Çак кунсенче районти пушар хуралĕн ĕçченĕсем массăллă мероприяти ирттерме палăртнă, кашни вĕрентӳ, культура учрежденине тĕплĕн тĕрĕслеççĕ. Хăрушсăрлăх ыйтăвне хускатмалла. Юрий Александрович канашлура кирек епле лару-тăрăва та хатĕр пулмаллине палăртрĕ. Халĕ, акă, юр çук. Вăл вăйлă çуса лартас пулсан – çак саманта та хатĕр пулмалла.

Район администрацийĕ паянхи кун ыйтакан информаци технологине пурнăçа кĕртес ыйту çине те пысăк тимлĕх уйăрать. Çакă районта пурăнакансене влаç ĕçĕхĕлĕпе хăвăртрах тата çывăхрах паллашма май парать. Район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыракан А.В. Краснов планеркăра палăртнă тăрăх, документсен çаврăнăшне электронла майпа йĕркелессипе ĕçсем малалла пыраççĕ. Кун çинчен вăл тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Планеркăра юн кун районта пĕрлехи информаци кунне иртересси, çынсене ĕçпе тивĕçтересси çинчен чарăнчĕç. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Т.А. Антонова çынсене хушма ĕçпе тивĕçтермелли республикăра тĕллевлĕ программа епле пурнăçланни çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Паянхи куна вара районта ĕçсĕррисем 153 çын, ĕçсĕрлĕх шайĕ – 0,69 процент.

Республикăра «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафон пуçланчĕ. Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова пĕлтернĕ тăрăх, районта пурăнакансем ялаласем илсе килме пуçларĕç. Çавăн пекех районти ветерансен хорне çӳрекенсем укса пуçтарнă. Район администрацийĕн ĕçченĕсем те тӳрех хутшăнчĕç марафона.

Планеркăра çавăн пекех обществăлла йĕркелĕхе сыхлас, Çĕнĕ çул уявĕсем çитнĕ май январĕн малтанхи кунĕсенче пенси илекенсене декабрĕн юлашки кунĕсенче тивĕçтерни çинчен те калаçу пулчĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**